# Чăваш тĕрри – асмлă тĕрĕ

Чăваш тĕрри епле илемлĕ!
Ăçта кăна курмастпăр-ши ăна?
Чăваш  тĕрри хĕвел хĕлхемлĕ,
Çӳл тӳпене çĕклет вăл ман чуна.
Чăваш тĕрри-эрешĕ чаплă –
Ман несĕлсен ытарайми тупри.
Халь тĕнчипех, туссем, вăл паллă!
Çуках, çуках унран пахи, хитри.
Сурпан çинче ăна куратăп.
Куç умĕнчех масмак та ал шăлли...
Тухья çине савса пăхатăп.
Ытла ăста, ăста хуçин алли.
Чăваш тĕрри – асамлă тĕрĕ!
Чечексемпе çиçет пекех  çаран…
Чăвашăн пиллĕ ывăл-хĕрĕ,
Ăна пĕтме ан парччĕ нихăçан!


**Светлана Никитина,**

**Патăрьел районĕ,**

**Пăлапуç Пашьел вăтам шкулĕ**